Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Юнкун
2007 ç.,юпа, 17

83
/9000/№

Хаçат 1932 çултанпа туха тăрать
Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

## *Чăваш Республикин Президенчĕн УКАЗĔ*

### 2008 çулта Республика кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Патшалăх уявĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн, Чăваш республикин муниципалитет тытăмĕсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне малалла хавхалантарас тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. 2008 çулта Республика кунне уявлассипе çыхăннă тĕп мероприятисене Шупашкар хулинче, çавăн пекех социаллă пурнăçпа культура, инженери, транспорт инфратытăмне аталантарас, ялсенчи строительствăпа хăтлăх пахалăхне çĕклес енĕпе пысăк кăтартусем тунă Йĕпреç тата Муркаш районĕсенче ирттерес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

2008 çулта Республика кунне хатĕрленмелли тата ирттермелли мероприятисен планне, çав шутра чикĕлеш енчи хăнасене чĕнсе инвестиции форумĕ, çавăн пекех пĕтĕм Раççейри черетлĕ фестиваль тата халăх пултарулăхĕн конкурсĕсем ирттерессине хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле;

Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен Республика кунне уявлассипе çыхăннă мероприятисене вĕсен территорийĕнче ирттермелли право çĕнсе илмелли конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн Йĕпреç тата Муркаш районĕсене ялсен общество инфратытăмне аталантарма укçа уйăрса памалла.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2008 çулта Республика кунне халалласа йăлана кĕнĕ «Акатуй» уявсем, культурăпа спорт мероприятийĕсем йĕркелеме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

***Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.***

2007, юпа, 10, 88№.

## Республика Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçи Энвер Аблякимов çак документа ăнлантарса парать

***– Энвер Азизович, 2008 çулта Республика кунне уявласси тата сумлăрах пулĕ. Уяв республикăн икĕ районĕнче иртет. Кунашкал йышăну мĕнпе сăлтавланнă?***

– 2008 çулхи Республика кунĕн уйрăмлăхĕ – уява харăсах Чăваш Республикин тĕп хулинче тата икĕ районта ирттерни. Йĕпреç тата Муркаш районĕсем халăхăн социаллă пурнăçпа, культурăпа, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе, транспортпа çыхăннă ыйтăвĕсене тивĕçтерес, çавăн пекех ялсенчи строительствăпа хăтлăх ыйтăвĕсемпе аталанăвăн пысăк шайне кăтартаççĕ.

Ку – районсен хушшинчи çивĕч конкуренци палли. Мĕн пур муниципалитет пĕрлешӳвĕнче çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе нумай тăваççĕ, çавăнпа та пĕр района суйласа илме йывăр пулчĕ. Комисси икĕ район Республика кунне ирттермелли вырăн пулма тивĕç тесе йышăнчĕ.

***– 2008 çулхи республика кунĕнчен тата мĕн кĕтмелле?***

– Юлашки çулсенче пуçласа Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров Министрсен Кабинетне чикĕлеш енчи тата хамăр çĕршыври пиренпе кӳршĕллĕ регионсенчи ĕçлĕ çынсене, пирĕн предприятисемпе çыхăну тытакан компанисене явăçтарса пысăк инвестици форумĕ ирттерме хушрĕ. Чăваш Ен экономикин тĕрлĕ отраслĕнче – машиностроенире, электроприборсем тăвассинче, агропромышленноç комплексĕнче, строительствăра, çавăн пекех общество инфратытăмне аталантарассинче – ĕçлеме лайăх условисем йĕркелес енĕпе республикăра питĕ пысăк ĕç пурнăçлани çапла тума пулăшать.

Ют çĕршывсен агентствисем хакланă тăрăх, Чăваш Енĕн инвестици рейтингĕ питĕ пысăк, обществăпа политика лару-тăрăвĕ йĕркеллĕ, çĕршыв ертӳçисен ячĕсумĕ пур. Раççей Президенчĕ В. В. Путин панă хаклав та çакнах çирĕплетет.

Çапла çине тăрса ĕçлени тивĕçлĕ кăтарту кӳретех. Пирĕн предприятисем, хуласем, районсем социаллă пурнăçпа экономикăна малалла аталантарма самай пысăк укçа илессе шанма май пур.

***– Энвер Азизович, Республика кунĕнче Чăваш Енре темиçе çул йĕркелекен йăлана кĕнĕ мероприятисем пулĕç-и?***

– Федераци министерствисемпе пĕрле йĕркелекен мĕн пур мероприятие малалла тăсапăр. Сăмахран, çитес çул Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн XVI Раççей çăл куçĕсем» фестивалĕ, Пĕтĕм Раççейри ал ăстисен VI «Ăстасен Русĕ» конкурсĕ, спорт ăмăртăвĕсем пулаççĕ. Чăваш Ен çыннисемпе хăнисем хăйне евĕрлĕ çĕнĕ мероприятисене те хутшăнĕç.

## ТĔП ÇУЛ-ЙĔРЕ ТЫТСА ПЫМА МАЙ ПАРАÇÇĔ

**Тунтикун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.**

Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикипе архив ĕçĕн тата вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕсем Наталья Володина, Галина Чернова, çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ Сергей Дринев хăш-пĕр полномочие федераци шайĕнчен регионсене панă тата Раççей Правительствинче улшăнусем пулса иртнĕ май министерствăсен ĕçне йĕркелемелли плансем çинчен пĕлтернĕ. 2008 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ĕçре чăрмавсем ан пулччăр тесе Николай Федоров çывăх вăхăтрах управлени тата йĕркелӳ енĕпе йышăнусем тума хушнă.

Финанс министрĕ Николай Смирнов республикăн кăçалхи бюджетне улшăнусем кĕртесси çинчен пĕлтернĕ, çапла палăртнă: «Хушма тупăшсем пур, çапла вара тĕп çул-йĕре пурнăçлама хушма укçатенкĕ те тупăнать».

Планеркăра çамрăк специалистсене ялсене ярас тĕлĕшпе муниципалитет влаçĕсен кадр политикине сӳтсе явнă. Чăваш Республикин Президенчĕ ку енĕпе районсен пуçлăхĕсем çителĕксĕр ĕçленине, çак ĕçе вăйлатмаллине палăртнă.

***ЧР П[illegible] прес[illegible]-служби.***

## ОФИЦИАЛЛĂ ПĔЛТЕРӲ

**2007 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче Йĕпреç район депутачĕсен Пухăвĕн черетлĕ ларăвĕ иртет. Унта çак ыйтусене сӳтсе явaççĕ:**

1. Йĕпреç район депутачĕсен Пухăвĕн 2003 çулхи сĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене налуксемпе сборсене йĕркелесси çинчен саккунпа килĕшӳллĕн Йĕпреç районĕнче налуксене йĕркелесе пымалли ыйтусем çинчен» Положени çинчен» 19-мĕш номерлĕ йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

2. Йĕпреç район депутачĕсен Пухăвĕн 2005 çулхи юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнчи «Хăш-пĕр ĕç-хĕлрен тухакан палăртса хунă тупăш çине пĕрлехи налук хывас системăна ĕçе кĕртесси çинчен» 32/1-мĕш номерлĕ йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

3. Йĕпреç район депутачĕсен Пухăвĕн 2006 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчи «Йĕпреç районĕн 2007 çулхи бюджечĕ çинчен» 12/4-мĕш йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

4. Йĕпреç районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн гараж боксĕн çуртне муниципалитет харпăрлăхĕнчен федераци харпăрлăхне парасси çинчен.

5. Трансформатор подстанцине, электроэнергин кабель линине тата сывлăшри линине Йĕпреç районĕн харпăрлăхĕнчен Чăваш Тимеш ял тăрăхĕн харпăрлăхне парасси çинчен.

6. «Йĕпреçри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр» патшалăх управленийĕ ĕç паракансемпе пĕрле ĕçлесси çинчен.

Ларăва хула тата ял тăрăхĕсен, район администрацийĕсен пай пуçлăхĕсене, федераци органĕсен подразделенийĕсен, мĕн пур харпăрлăхлă предприятисемпе организацисен тата учрежденисен, колхозсемпе ЯХПК ертӳçисене, шкулсен директорĕсене, шкул çулне çитменнисен вĕрентӳ учрежденийĕсен ертӳçисене чĕнеççĕ.

Лару район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пуçланать.

## РЕСПУБЛИКА УЯВНЕ ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕНЕР

**Иртнĕ шăматкун район администрацийĕн ларусен залĕнче районти явăплă çынсемпе, тĕрлĕ харпăрлăхри предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳçисемпе, предпринимательсемпе ирттернĕ канашлури тĕп калаçу пирĕн районта Республика кунне хатĕрленсе уявласси çинчен пычĕ. Канашлăва район пуçлăхĕ Анатолий Петров ертсе пычĕ.**

– Пирĕн район республикăн тĕп праçникне ирттерме право çĕнсе илессишĕн конкурса кăçал тăрăшса хутшăнчĕ. Пĕлетĕр ĕнтĕ, Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хăйĕн Указĕпе Республика кунне Йĕпреç районĕнче те ирттересси çинчен çирĕплетрĕ. Çакă республика пуçлăхĕ, правительство пире хисеп туни тата шанни çинчен кăна каламасть, пирĕн çине пысăкран та пысăк калăпăшлă ĕç тата явăплăх тиенни çинчен пĕлтерет, – терĕ Анатолий Иванович. – Çак пысăк уява пĕрлехи вăйпа хатĕрленсе ирттерме тивет.

Кам ытти çулсенче Республика кунне уявланă район центрĕсенче пулса курнă, вĕсенче общество инфраструктури самай аталаннине, тирпей-илем çӳллĕ шайра пулнине – кĕскен каласан, çав районсем палăрмаллах улшăннине асăрханă ĕнтĕ. Район пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх, çывăх вăхăтрах уява хатĕрленсе ирттерессипе çыхăннă тĕп мероприятисен планне тăратмалла.

– Эпĕ ĕнер ку ыйтупа темиçе министрпа канашласа илтĕм ĕнтĕ. Указпа паллашнă чухне эсир те асăрхарăр пулĕ, Президент республика Правительствине Республика кунне ирттерекен районсене общество инфратытăмне аталантарма укçа-тенкĕ уйăрса пама хушнă, – калаçăва малалла тăсрĕ Анатолий Петров пуçлăх.

Йĕпреç поселокĕн тата районти хăш-пĕр ялсен сăн-сăпачĕ сисĕмлех çĕнелсе улшăнмалла, урăхла каласан, пирĕн тăрăхра социаллă пурнăçпа культура, инженери, транспорт инфратытăмне аталантарассипе чылай ĕç туса ирттермелле. Тĕслĕхрен, район центрĕнче илсен, тĕп урамсене, тротуарсене тĕпрен юсамалла, скверсене, культурăпа кану паркне çĕнĕ сăн кĕртмелле, организацисемпе учрежденисен, сутуилӳ çурчĕсене тата вĕсен территорийĕсене илемлетмелле. Кунта строительствăпа хăтлăх пахалăхĕ тĕп вырăнта пулĕ. Çакна тĕпе хурса район администрацийĕ çумĕнче дизайн канашне туса хунă.

Çавăн пекех районти автоçулсен аиккисене йĕркене кĕртес тĕлĕшпе те пысăк калăпăшлă ĕç пурнăçлама тивет. Çак ĕçсене, паллах, ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе ял хуçалăх кооперативĕсемпе колхозсен правленийĕсене те анлăн явăçтараççĕ.

Паянхи урамсенчи йĕркесĕрлĕх пирки çивĕч ыйту çĕклерĕ район пуçлăхĕ. Республика кунĕн тĕп мероприятийĕсенчен пĕри – Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» XVI фестивалĕ Йĕпреçре те иртет. Пирĕн тăрăха Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенчен, чикĕлеш енчен çĕршершывсенчен артист килмелле. Пысăк хăнасем умĕнче намăс курас мар, Йĕпреç Ен çинчен ырă туйăмпа аса илес пурăнччăр тесен, уйрăм çурт-хуçалăхра пурăнакан кашни çыннăн урамсенче, кил-çурт таврашĕнче тасалăхпа тирпейлĕх хуçалантăр тесе тăрăшмалла. Вырăнти влаç килсе туса парасса кĕтсе пурăнмалла мар. Пирĕн пĕрлехи пысăк тӳпе хамăр поселок, ял тата район чыс-сумне çĕклеме çеç пулăшĕ.

Республика кунĕ тĕлне Йĕпреçри культурăпа кану паркĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртмелле. Уяв халăхне тивĕçлĕ шайра кĕтсе илмелли вырăн пултăр тесен, сценăна тĕпрен çĕнетмелле, концерт площадкине юсамалла т. ыт. те.

Республикăн тĕп уявĕ пирĕн районта икĕ куна тăсăлать. Çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче уяв халăхне Камай уйĕ йышăнĕ. Çак кун кунта йăлана кĕнĕ «Камай уйĕн урхамахĕсем» ут тата спорт турнирĕ республика шайĕнче кăна иртмĕ, хресчен лашисемпе ăмăртма Раççейри ытти регионсенчен те килессе шанатпăр. Çавăн пекех çак илемлĕ вырăна республикăри ял тăрăхĕсен командисен иккĕмĕш спартакиадине хутшăнакансем те йышлăн пуçтарăнĕç. Сăмах май, пĕрремĕш спартакиада та Камай уйĕнче çӳллĕ шайра иртнĕччĕ. Пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятисене йĕркелесе ирттерме Пучинке ял тăрăхĕн территорийĕнче те чылай ĕç пурнăçлама тивет.

– Ку таранччен эпир пĕрлехи вăйпа темиçе хутчен те районта пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттернĕ. Республика уявĕ пиртен питĕ пысăк калăпăшлă ĕç ыйтать. Çакна валли пирĕн вăй-хал та, ăнланулăх та, яваплăх та пур. Апла пулсан, ĕçе пуçăнар, – çапларах пĕтĕмлетрĕ хăйĕн сăмахне район пуçлăхĕ Анатолий Петров.

***К. ДМИТРИЕВ.***

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Ял хуçалăх производствинче нумай çул ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа «Ибресинская» агрофирма» АХО трактористне **Николай Романович ЯРЗУНОВА** Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## РАЙОН ХЫПАРÇИСĔР АН ЮЛĂР!

**Хаклă тусăмăрсем, хисеплĕ вулакансем! «Çĕнтерӳшĕн» хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнтармалли тапхăр пырать. Ăна çак хаксемпе çырăнтараççĕ:**

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН УЙРĂМĔСЕНЧЕ – 169 тенкĕ те 62 пуспа;**

**«ЧĂВАШПИЧЕТ» АУО КИОСКĔНЧЕ – 120 тенкĕпе;**

**ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔНЧЕ /альтернативлă майпа/ – 105 тенкĕпе.**

**«Çĕнтерӳшĕн» çĕршыв, республика, район хыпарĕсене чи малтан пĕлтерекен хаçат. Ăна çырăнса илме ан манăр!**

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

# ХВАТТЕРСЕН ХАКĔСЕМ ЧАКАÇÇĔ

Иртнĕ эрнере Шупашкарта ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – хула строительствин тата общество инфраструктурин аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров тата унăн виçĕ çумĕ республика, çав шутра район тата хула хаçачĕсен журналисчĕсемпе тĕл пулу ирттерчĕç.

Пресс-конференцие А. Гончаров отчетран мар, журналистсен ыйтăвĕсене хуравланинчен пуçларĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсене уйрăмах пурăнмалли çурт-йĕр хакĕсем пĕр май ӳссе пыни кăсăклантарчĕ. Министр ăнлантарса панă тăрăх, чăнах та, Атăлçи федераци округĕнчи вăтам хаксемпе танлаштарсан, Чăваш Енре вĕсем пысăкрах. «Хаксене тĕрĕс ӳстернĕ е юри хаклатнă – халĕ тĕрĕслетпĕр», – палăртрĕ вăл. Минстрой пуçлăхĕ малалла çакна пĕлтерчĕ: юлашки вăхăтра пĕр тăваткал метр хакĕ чакса пырать – халĕ 32 пин тенкĕпе сĕнеççĕ.

Ведомство пуçлăхĕ тата çакна палăртрĕ: çĕршывра цемент туса кăларассине анлăлатас тĕллевпе çĕнĕ заводсем çĕклеççĕ. Шел пулин те, Чăваш Енре кунашкал предприятисем тумаççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн чĕртавар çук-мĕн. Кирпĕч кăларакан икĕ завод тăвас ыйтăва пăхса тухаççĕ. Кунсăр пуçне, Çĕнĕ Шупашкарти çурт-йĕр тăвакан комбината реконструкцилеççĕ, унта тĕрлĕ йышши тимĕр бетон тата ытти изделисем туса кăларма пуçăнаççĕ.

Министр шучĕпе, пурăнмалли çурт-йĕре чи чапли тата социаллă шайри çине уйăрни сăпайлă мар. Çав çуртсем пахалăхĕ енĕпе çеç уйрăлса тăраççĕ. Паянхи кун çӳллĕ мар çуртсенче пурăнма кăмăллаççĕ. 130-150 тăваткал метр лаптăклă çурт хушма пӳлĕмсемпе пĕрле – элитлă çурт-йĕр мар, хальхи вăхăтри йĕркеллĕ пурăнмалли вырăн, тесе шутлать А. Гончаров.

Минстрой пуçлăхĕ журналистсене «Çĕнĕ хулара» мĕнле ĕçсем пурнăçлани çинчен те каласа пачĕ: хальхи вăхăтра унта газ пăрăхĕсене хываççĕ, электроэнергипе тивĕçтерекен линисем тăвассипе проект хатĕрлеççĕ, территорие планлассипе ĕçлеççĕ.

Унтан министр «Çамрăк çемье» программа тата çул-йĕр тăвасси пирки чарăнса тăчĕ.

***К. КОСТИН.***

## РЕСПУБЛИКА ХЫПАРĔСЕМ

**ЧĂВАШ ЕН** Президенчĕ Николай Федоров 2007 çулхи раштавăн 5-9-мĕшĕсенче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче М. Д. Михайлов ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери XVII опера фестивальне ирттересси çинчен хушу кăларнă. Çак фестиваль Раççейре пысăк хисепе тивĕçнĕ, унта пĕтĕм çĕршыври опера юрăçисем кăна мар, чикĕ леш енчи солистсем те хутшăнаççĕ. Тĕнче классикĕпе танах вырăс, чăваш композиторĕсен произведенийĕсем те янăраççĕ. Кăçал уяв наци произведенийĕпе – А. Васильевăн «Иван Яковлев» оперипе – асра юлĕ.

**ЯЛХУÇАЛĂХПА** продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен професси уявĕ ячĕпе Мускавра ирттернĕ мероприятисенче Чăваш Ен аграрийĕсен официаллă делегацийĕ те пулнă. Çĕршыв тĕп хулинче, Пĕтĕм Раççейри курав центрĕнче, «Ылтăн кĕркунне-2007» агропромышленноç куравĕ ĕçленĕ. Чăваш Республикинче ялхуçалăх продукчĕсем туса илекенсем унта аш-какайпа сĕт-çу, çăкăр-булка, кондитер изделийĕсем, пылак шывсем т. ыт. те тăратнă. РФ Ялхуçалăх министерствипе Мускав правительстви чăвашсен апат-çимĕçне ярмăрккара сутма ятарлă вырăн уйăрса панă, вăл Кăнтăр хĕвелтухăç администраци округĕнче вырнаçнă. Суту-илĕве ялхуçалăх предприятийĕсемпе фермер хуçалăхĕсем, килте уйрăм хуçалăх тытакансем йышлă хутшăннă.

**РЕСПУБЛИКĂРА** тепĕр издани хутшăннă. Федераци налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ уйăхсерен тухса тăракан «Налоговые известия Чувашской Республики» журналăн пĕрремĕш номерне кăларнă. Çак издани организацисен ертӳçисене, уйрăм предпринимательсене, бухгалтерсене, экономистсене тата юристсене налук саккунĕсенчи йышăнусем тата нормативлă актсемпе усă курасси çинчен пĕрмаях пĕлтерсе тăрĕ.

ПУЛĂШĂР!

# ХĂÇАН ĂШĂ ПАРАÇÇĔ?

Нумаях пулмасть район хаçатĕнче пичетленнĕ «Кĕтмен кăлтăксем сиксе тухмĕç» статьяра «Йĕпреç районĕнчи пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пĕрлехи заказчик дирекцийĕ» МП ертӳçи ăшăтса хутмалли сезон тĕлне котельнăйсемпе ăшă сечĕсене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем çинчен каласа панăччĕ. Вăл Леспромхоз тата Димитров урамĕсенчи нумай хваттерлĕ çуртсене ăшăтма 100 кВт хăватпа ĕçлекен икĕ хуран вырнаçтарни çинчен çирĕплетсех пĕлтернĕччĕ. Эпир, асăннă урамсенче пурăнакансем, çак тĕслĕхĕн тӳнтер енне уçса парасшăн: унччен ĕçленĕ ăшă сетьне РСУ котельнăйĕнчен татса çĕнĕ хурансем патне сыпăнтарнă май монтаж тата ытти юсав ĕçĕсене паянхи кун та вĕçлемен-ха. Подрядчик тата яваплă çынсен ӳрĕк-сӳрĕклĕхне пула 34 хваттерте пурăнакан çынсем ăшăсăр нушаланаççĕ тата шывсăр юлас хăрушлăх та пур. Пулăшу ыйтса вырăнти хăй тытăмлăх органĕнче темиçе хут пулин те усă кӳмерĕ.

Урамра шыв пăрăхĕсене хывнă хыççăн чавса пĕтернĕ çĕре кирлĕ пек тикĕслемерĕç тата пурăнмалли çуртсем патне пыракан çула юсамасăр хăварчĕç.

***Леспромхоз тата Димитров урамĕсенчи 13-мĕш номерлĕ çуртсенче пурăнакансем: В. Кузичкина, Г. Смирнова, Р. Володина, Р. Калинина, Т. Фадеева, Л. Томилова, Г. Демидова, Г. Панкова, В. Мингалева, В. Максимова, Г. Мидюкова, Л. Михайлова, А. Григорьева, Л. Клементьева.***



***Д. ДИМИТРИЕВ фотоэтючĕ.***

ÇУЛ-ЙĔР ХĂРУШСĂРЛĂХĔШĔН

# «ĔÇ, АЙВАНĂМ!..»

Юнра «симĕс çĕлен» наркăмăшĕ чӳхенсе тăнă чухне этем пурнăçĕ ниме те тăмасть иккен. Чăрăшкассинчи çул çинчи аварире вилнĕ икĕ вăйпитти çамрăка юлашки çула ăсатнă чухне Хурамалти тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем те куçĕсене шывлантарсах макăрнă. Анчах, питĕ шел, инкек ĕçкĕ-çикĕне пула сиксе тухнине часах манса каякансем те пур-ха.

Акă юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче, 23 сехет çитеспеле, Хурамал-Йĕпреç автоçулпа «Мицубиси» маркăллă автомобиль шăлтарса пынă. Салонра 4 пассажир – Ю. Долматов, Т. Теплова, Г. Кириллова, Ю. Горбунов, руль умĕнче Н. Карасев (вĕсем пурте Хурамалтан). «Красный партизан» хуçалăхăн аэродромĕ çывăхĕнче çăмăл машина кювета чăмнă. Пассажирсене больницăна ăсатнă. Водитель вара тĕрĕс-тĕкелех юлнă. Тухтăрсем çак ушкăнра пĕр урă çын та пулманнине çирĕплетнĕ. Патшалăх автоинспекторĕсем çакна хăйсем курса ĕненнĕ.

Хурамал тăрăхĕнче ĕçкĕ-çикĕ хуçа пулнине çак таврара пулса иртнĕ инкексем аван çирĕплетеççĕ. Ку тăрăхра çапла пурăнаççĕ: аякка кайса ĕçлеççĕ, кĕсъе тулли укçа илсе килеççĕ, унтан эрнипе ĕçеççĕ, ĕçеççĕ... Тăна кĕрсен каллех ĕçлеме тухса каяççĕ.

Пурнăç пĕр вĕçĕм çапла пырать. Хулпуççи çине улăхса ларнă шуйттанĕ вара руль умне ларнисене хăлхаран пăшăлтатсах тăрать: «Ĕç, айванăм! Ĕç! Санăн машину хăватлă!..» Анчах йĕрке хуралçисем тăвайманнине тӳперисем: «Çитĕ иртĕхсе», – тесе пăнчă лартаççĕ. Ĕçкĕç водителе пĕр çул анчах, вăл та пулин инкек патне илсе çитерет.

***А. ЛУКЬЯНОВ, ÇÇХПИ районти уйрăмĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен инспекторĕ.***



**ӲКЕРЧĔКРЕ:** ***«Мицубиси» авари хыççăн.***

## ЛЕНИНГРАД ОБЛАÇĔНЧЕ ВĂРЛАНĂ, ЧĂВАШ ЕНРЕ ТУПНĂ

Чăваш милицийĕн сотрудникĕсем иртнĕ çулхи кĕркунне вăрласа кайнă автомобиле тупнă. 1990 çулта туса кăларнă «Фольксваген Пассат» машинăн хуçи Йĕпреçре пурăнакан 29 çулхи гражданин иккен. Автомобиле тĕрĕслеме чарсан, çакă палăрнă: кузовăн тата двигателĕн идентификаци номерĕсене улăштарнă, регистраци докуменчĕсенче вара суя паллисене асăрханă. Агрегатсен малтанхи номерĕсене тупса палăртсан, çак машина пĕлтĕрхи авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнчен шыравра пулнине пĕлнĕ. Ăна Ленинград облаçĕнче вăрласа кайнă пулнă.

***/«МК» в Чебоксарах»/.***

КИРЕ ПУКАНĔ

## ПИРĔН ЕНТЕШ – ЕВРОПА ЧЕМПИОНĔ

Юпа уйăхĕн 11-14-мĕш кунĕсенче Нева çинчи хулара кире пуканĕ йăтакансен Европăри чемпионачĕ иртнĕ. Континентри чи вăйлă спортсменсемпе тупăшма помост çине Чăваш Енĕн маттурĕсем те тухнă. Пучинкере çуралса ӳснĕ, хальхи вăхăтра Чăваш ял хуçалăх академийĕнче вĕренекен Алина Иванова, хĕрсен хушшинче иккĕмĕш вырăна тухса кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

Пирĕн тепĕр ентеш, Санкт-Петербургри аграри университетне пĕтернĕ, халĕ асăннă хулари П. Лесгафт ячĕллĕ физкультурăпа спорт академийĕнче вĕренекен Владимир Петров çамрăк вара пысăк çитĕнӳ тунă: вăл Европа чемпионĕ пулса тăнă. Чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа ăна ăшшăн саламлатпăр.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

ПĔР ШКУЛТАН КИЛНĔ ХЫПАРСЕМ

## ĔÇЛĔ КАНУ

Çуллахи вăхăта пĕлсе усă курни – çав тери кăмăллă пулăм. Канупа пĕрле ĕçе черетлесе пыни уйрăмах усăллă. Çакна шута илсе каникул вăхăтĕнче Йĕпреç поселокĕнчи ача-пăча библиотеки «Лето – не для скуки» ятпа конкурс йĕркелерĕ. Çак тăвата пайран тăракан тупăшăва Чăваш Тимешри вăтам шкулта вĕренекен Вика Данилова та кăмăлпа хутшăнчĕ.

Çăвĕпех тăсăлчĕ ĕçлĕ кану: сочиненисем те çырчĕ, кăсăклă калавсем те калăпларĕ, ӳкерчĕксем ăсталарĕ. Тăрăшни сая каймарĕ. Унăн ĕçĕ «Йĕпреçсем çĕршыв историйĕнче» номинацире пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Дипломпа хаклă парнене тивĕçнĕ Вика.

## АСРА ЮЛНĂ КУН

Ĕçпе педагогика ветеранĕсем сахал мар пирĕн тăрăхра. Вĕсем çине Чăваш Тимешри вăтам шкулта вĕренекенсем пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Уроксенчен пушансан тĕрлĕ ĕçпе пулăшма тăрăшаççĕ, уявсенче ăшă саламсем яма та вăхăт тупаççĕ.

Акă ваттисене халалланă кун 7 класра вĕренекенсем хăйсен ертӳçипе пĕрле Чăваш Тимеш ялĕнчи Ленин урамĕнче пурăнакансене – Валентина Раймовăна, Елизавета Кураковăна тата Анна Михайловăна – ăшă сăмахсемпе, уяв открыткисемпе, чечек çыххисемпе саламларĕç. Кĕрхи хĕвеллĕ кун ватăсен чунне çемçетрĕ, савăнăç куç çулĕ йăлтăр çиçрĕ питре.

## ЧЕЧЕКСЕН УЯВĔНЧЕ

Чечексен тĕнчинче пулнăнах туйăнчĕ çак кунсенче савнă шкул. Юратнă вĕрентекенĕсене халалласа уçрĕç ачасем чаплă уява.

Мĕнле кăна чечек çыххи çук пулĕ кунта! Пĕри тепринчен пуянрах, капăртарах. Ячĕсене те суйласа илме пĕлнĕ тата.

Тупăшу çивĕч пулчĕ. Жюри вара çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕ. 1 вырăнта «Кĕрхи илем» (3 кл.), «Ачашлăх» (7 кл.), «Кĕр парни» (6 кл.) тата «Кĕр чĕри» (10 кл.); 2 вырăна «Принц хăйĕн асамçисемпе» (5 «а»), «Сире валли» (5 «б»), «Çепĕçлĕх» (9 кл), «Капăр хăмпăсем» (2 кл.), «Кĕрхи асамат кĕперĕ» (4 кл.) пайларĕç; 3 вырăншăн «Кĕр пики» (1 кл.), «Чечек пурнăçĕ» (8 кл.), «Сыв пуллашу» (11 кл.) тупăшрĕç.

## КОЛХОЗА ПУЛĂШСА

Çулсерен ялти вăтам шкул Ильич ячĕллĕ тăван колхоза пулăшу парать. Кăçал та вĕренекенсем кĕрхи иккĕмĕш çăкăра пуçтарса кĕртме пулăшрĕç. Никам та айккинче юлмарĕ. Кĕске вăхăтрах уйăрса панă лаптăка пуçтарса тирпейлерĕмĕр.

Колхоз Çĕнĕ çул уявĕнче ачасене пылак парнепе савăнтарĕ, тепĕр енчен шкула та аванах усă пулĕ.

***Н. ЕВДОКИМОВА, «Çамрăк çыравçă» кружок ертӳçи.***

## ÇĔНĔ ШКУЛ ÇУРТНЕ ÇИТСЕ КУРТĂМĂР

Эпир, Туçа шкулĕн 7-мĕш класĕнче вĕренекен ачасем, авăн пуçламăшĕнче «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра Чăваш Тимешре кăçал хута янă çĕнĕ шкула сăнласа панă ӳкерчĕк куртăмăр. Мĕн тери хитре те капмар çурт! Пирĕн тӳрех çав ялти Пĕлӳ керменне çитсе курас ĕмĕт çуралчĕ. Класс ертӳçи Н. А. Максимова пирĕн шухăша ырларĕ. Акă çитрĕ вăл кĕтнĕ кун! Автобус шкул çывăхнех антарса хăварчĕ. Пире Л. И. Михайлова директор кĕтсе илчĕ.

Надежда Валерьевна вĕрентекен вара çĕнĕ çурт тăрăх кăтартса çӳрерĕ. Вĕренӳ пулăмĕсем çутă та хăтлă. Классенче – пĕтĕмпех çĕнĕ сĕтел-пукан. Информатика пӳлĕмĕнчен тухас та килмерĕ пирĕн. Чăтаймарăмăр, компьютерсем умне те кĕрсе лартăмăр. Ара, кун пеккине эпир пĕрремĕш хут куратпăр-çке!..

Спортзалра та мĕн тери ирĕклĕ. Мечĕксене тапкаласа пăхрăмăр.

Вăрăм коридорсен тăршшĕпех – ларса канмалли пукансем, теннис сĕтелĕ те пур. Хальхи ĕмĕр ыйтакан чăн-чăн шкул ĕнтĕ.

Киле каяс умĕн шкул столовăйĕнче хăна пултăмăр.

Чăваш Тимеш шкулĕпе тулли кăмăлпа сывпуллашрăмăр. Физикăпа информатика вĕрентекен Э. Р. Хуснетдинов пире асăнмалăх ӳкернĕ сăнӳкерчĕксем парнелерĕ.

Киле вара çуранах утас терĕмĕр. Чăваш Тимешĕнчен Тури Кĕлешкассине çитрĕмĕр. Икĕ яла асфальт çул çыхăнтарать иккен. Ара, эпир халиччен ку тăрăха килсе курман-çке. Тури Кĕлешкассинчен «Рассвет» комплекс патне те лайăх çул илсе пырать. Утсан-утсан, чарăнса тăрсах, тăван тавралăха сăнарăмăр, асăнмалăх сăн ӳкерчĕксем турăмăр. Кунĕ хĕвеллĕ те ăшă пулчĕ. Чарăннă вырăнтан ылтăн тум тăхăннă вăрман, катасем, кăн-кăвак шывлă пĕвесем куçа илĕртеççĕ, чуна тыткăнлаççĕ. Унта та кунта кĕтӳ çӳрени курăнать...

Вунă çухрăм утса, шăкăл-шăкăл калаçса пырса, вăхăт иртнине те сисмерĕмĕр.

Нумайлăха асра юлĕ пирĕншĕн çак çулçӳрев.

***Вера ПЕТРОВА, 7 класра вĕренекен.***

# ПОСТАНОВЛЕНИЕ главы Ибресинского района

## ОБ УСИЛЕНИИ МЕРОПРИЯТИЙ ПО ПРОФИЛАКТИКЕ ГРИППА И ОСТРЫХ РЕСПИРАТОРНЫХ ИНФЕКЦИЙ В ИБРЕСИНСКОМ РАЙОНЕ В ЭПИДСЕЗОН 2007-2008 Г.Г.

В 2006 г. в Ибресинском районе зарегистрировано 483 случая заболевания гриппом и ОРВИ, что в 2 раза ниже уровня 2005 года.

В соответствии с национальным календарем профилактических прививок в 2007 планируется привить против гриппа 3050 человек, в т. ч. детей дошкольных учреждений – 450 чел., учащихся 1-4 классов образовательных учреждений – 550 чел., медработников – 200 чел., работников сферы образования – 650, населения старше 60 лет – 800 чел. Однако это не исключает необходимость иммунизации и других групп населения, прежде всего, неорганизованных детей дошкольного возраста, работающего населения, не включенных в национальный проект в сфере здравоохранения.

В целях усиления мероприятий по предупреждению заболеваний гриппом и ОРВИ населения Ибресинского района и в соответствии со ст. 51 ФЗ от 30.03.1999 №52-ФЗ, ст. 1 ФЗ от 30.06.2006 г. №91-ФЗ «О внесении изменений в ст. ФЗ «Об иммунопрофилактике инфекционных заболеваний» **п о с т а н о в л я ю:**

1. Главам городского и сельских поселений:

1.1. Обязать руководителей предприятий и организаций независимо от организационно-правовой формы провести комплекс работ по созданию надлежащих условий в осенне-зимний период для работающих на открытом воздухе и поддержанию необходимого температурного режима в детских образовательных, лечебно-профилактических учреждениях, жилых домах, на транспорте.

1.2. Ограничивать в период эпидподъема заболеваемости гриппом и ОРВИ проведение культурно-массовых мероприятий, связанных с большим скоплением людей.

2. Руководителям предприятий и организаций независимо от организационно-правовой формы:

2.1. Своевременно выделить ассигнования на закупку противогриппозных вакцин для иммунизации сотрудников.

2.2. Организовать работу объектов в осенне-зимний период с соблюдением необходимого температурного режима, обеспечить работающих на открытом воздухе помещениями для обогрева и приема пищи.

3. Главному врачу МУЗ «Ибресинская ЦРБ» Купкенову Ш.Э.:

3.1. Обеспечить безусловную реализацию приоритетного национального проекта в сфере здравоохранения (национального календаря профилактических прививок) по иммунизации против гриппа в осенний период 2007 г.

3.2. Произвести расчет потребности в инактивированных и атенуированных противогриппозных вакцинах для иммунизации населения, не подлежащих прививкам против гриппа в рамках национального приоритетного проекта в сфере здравоохранения.

3.3. Организовать проведение прививок населению, не относящемуся к группе риска, но желающим привиться на платной основе.

3.4. Обеспечить соблюдение надлежащих условий транспортирования и хранения вакцин в лечебно-профилактических учреждениях в соответствии с санитарно-эпидемиологическими правилами СП 3.3.2.1248-03 «Условия транспортирования и хранения медицинских иммунологических препаратов».

3.5. Обеспечить готовность лечебно-профилактических учреждений к приему больных гриппом и ОРВИ в период сезонного подъема заболеваемости, предусмотрев создание необходимого резерва препаратов для лечения гриппа и его осложнений, необходимый объем коечного фонда, создание при необходимости прививочных бригад.

3.6. Представлять ежемесячно в ФГУЗ «Центр гигиены и эпидемиологии в Чувашии п. Вурнары» информацию о реализации вакцин против гриппа и противогриппозных средств в разрезе учреждений, предприятий, организаций.

3.7. Проводить систематическую пропаганду среди населения о необходимости и целях иммунизации против гриппа, о доступных и эффективных мерах общественной и индивидуальной профилактики гриппа и ОРВИ.

4. Директору ГУП «Аптека №39 п. Ибреси» Минздрава ЧР Григорьевой Т.Г.:

4.1. Обеспечить наличие в аптечных учреждениях необходимого количества препаратов для специфической и неспецифической профилактики, лечения гриппа.

5. Контроль за исполнением данного постановления возложить на 1 заместителя главы администрации Михалика В.Л.

6. О ходе выполнения постановления доложить к 20.12.2007 г.

**Глава Ибресинского района**
**А. И. ПЕТРОВ.**

п. Ибреси, 9 октября, №618.

# СЕМИНАР РУКОВОДИТЕЛЕЙ ДОШКОЛЬНЫХ УЧРЕЖДЕНИЙ

11 октября текущего года в актовом зале администрации района был проведен семинар - практикум с руководителями дошкольных образовательных учреждений района.

Активное участие в нем приняли специалисты Центра психолого-педагогического сопровождения. Открывая семинар, методист по дошкольному воспитанию Светлана Викторова отметила, что выбранная тема: «Организация и проведение коррекционной работы с агрессивными детьми» актуальна и злободневна.

Продолжая семинар, дефектолог Центра психолого-педагогического сопровождения отдела образования района Любовь Илларионова указала на основные причины и факторы, способствующие проявлению агрессивности у детей дошкольного возраста, отметила важную роль семьи и социума в развитии ребенка.

Дефектологом были подведены итоги тестирования «Моя семья», по результатам теста разработаны и даны методические рекомендации для педагогов и родителей.

# ЗАВЕРШЕНО СТРОИТЕЛЬСТВО ДОРОГИ ДО ДЕРЕВНИ СЮРБЕЕВКА

Согласно Указа Президента ЧР «О мерах по ускоренному завершению строительства сети автомобильных дорог Чувашской Республики» завершилось строительство асфальтированной дороги до деревни Сюрбеевка. Протяженность от трассы «Канаш–Ибреси» до центра усадьбы 600 метров. Строительство дороги заключили за кратчайший срок, за 2 месяца.

Тендер на строительство выиграло Ибресинское ДРСУ филиал Чувашавтодор. Директор Ибресинского ДРСУ Козлов В. Н. лично курировал строительство дороги. Его можно было увидеть на объекте как ранним утром, так и поздним вечером.

На днях планируется торжественное открытие долгожданной дороги. Жители деревни с нетерпением ждут этого дня и сердечно благодарят Правительство Чувашской Республики за заботу и внимание.

*(С сайта администрации района).*

# РЕЙТИНГ «ЕДИНОЙ РОССИИ» ЗА МЕСЯЦ ВЫРОС НА 13%

**10 октября «Левада-Центр» обнародовал результаты социологического опроса о рейтингах поддержки политических партий. Согласно данным социологов, большинство опрошенных россиян, уже решивших участвовать в выборах в Госдуму и определившихся в своих предпочтениях, собираются отдать свои голоса 2 декабря «Единой России», передает «Интерфакс».**

По данным опроса «Левада-Центра», проведенного 5-10 октября среди 1600 россиян, 68% респондентов, из тех, кто намерены принять участие в голосовании и определились в своем выборе, отдали бы 2 декабря предпочтение «Единой России».

Рейтинг поддержки «Единой России» по отношению к прошлому месяцу увеличился на 13%, показывают исследования «Левада-Центра». В сентябре, по данным опросов, поддержать ее на выборах были бы готовы 55% голосующих.

На втором месте, как и в прошлом месяце, - КПРФ, которая может рассчитывать на голоса 15% избирателей против 18% месяц назад. По данным «Левада-Центра», за тот же период снизился рейтинг ЛДПР - с 11% до 6% и «Справедливой России» - с 7% до 5%.

Согласно опросу, по 1% респондентов готовы проголосовать 2 декабря за «Яблоко», СПС, «Патриотов России», «Демократическую партию России», «Партию мира и единства», «Партию социальной справедливости». Все остальные партии имеют поддержку менее 1% респондентов.

После решения президента РФ Владимира Путина возглавить избирательный список «Единой России» на выборах в Госдуму эта партия получит дополнительные голоса, считают 63% опрошенных россиян. При этом 35% из них уверены, что количество ее сторонников увеличится значительно, показывают исследования Аналитического центра Юрия Левады.

# МЕТАФИЗИЧЕСКОЕ ОСНОВАНИЕ ЖИЗНЕТВОРЧЕСТВА В. Г. РОДИОНОВА

**У нашего народа в застолье есть обычай поминать предков (ваттисене асăнни). Мы капаем капельку напитка на стол. И это делаем, как правило, автоматически, механически. В лучшем случае краешком сознания вспоминая усопших близких. Так принято, так повелось. Сакральный, философский смысл этой традиции мне открыл В. Г. Родионов. «Тымарсене шăваратпăр» (поливаем корни), - сказал он.**

